25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ИЮЛЬ
4
ШАМАТКУН
154(6089) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВИТНĔ ИТЕМСЕМПЕ СУШИЛКĂСЕНЕ ХАЛЕХ ХАТĔРЛЕСЕ ХУМАЛЛА

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ авăн çапас ĕçе, тырăсене вырма тухнă хыççăн 4—5-мĕш кунсенчех тытăнма кирли çинчен колхозсене пĕр хут çеç мар кăтартса панă. Çак кăтартусем тырăсене пĕр тăкаксăр пухса кĕртес тата вăхăтра çапса пуçтарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Халĕ, тырăсем пулса çитес умĕнхи вăхăтра, колхоз руководителĕсен çĕнĕ тырпула вăхăтра итемсем çине кĕртес, ăна вăхăтра çапма пуçлас ыйтăва та асра тытмалла. Витнĕ итемсемпе сушилкăсене тырăсене пухма тухиччен юсаса, тасатса хумалла, çĕнĕ тырăсене кĕртме кĕлетсемпе складсене хатĕрлемелле.

Иртнĕ çул пирĕн республикăри хăш-пĕр колхозсем авăн çапас ĕçе организованно пуçăнманнине пула нумай тăкаксем турĕç. Кăçал вăл тăкаксем пирĕн пачах пулмалла мар. Кашни пĕрчĕ тырă учетра пулмалла, ăна вăхăтра вырса, çапса пуçтармалла.

Çанталăк кăçал йĕпе тăрать. Вăл авăн çапнă вăхăтра та çавăн пек пире чылай чăрмав кӳме пултарать. Çакă ĕнтĕ колхоз председателĕсем умне, çавăн пекех райçĕрĕç пайĕсенчи работниксем умне те витнĕ итемсене, сушилкăсене, тырă хумалли кĕлетсемпе складсене юсас, çĕнĕрен тăвас ыйтăва кăларса тăратать тата ку ĕçе тума халех тытăнма хушать.

Тухăçлă тырпул туса илсе тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене ытларах пулăшу парассишĕн большевикла тĕрĕшекен колхозсен çĕнĕ тырпула пĕтĕмпех пухса кĕртме хатĕрленмелле.

Красноармейски районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн витнĕ итемсем 3 пур. Вĕсене пурне те лайăх хырса тасатнă, таврари улăмсене йăлтах пуçтарнă. Колхоз çĕнĕ тырăсене кĕртме кĕлетсене пушатнă, вĕсене юсаса хатĕрленĕ. Колхозниксем тырă кĕлечĕсен урайĕсене кĕл шывĕпе çуса тухнă, çак кунсенчех кĕлетсене тата вĕсен таврашĕнчи вырăнсене дезинфекцилеме хатĕрленеççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Хлебороб» колхоз та хăйĕн витнĕ итемĕсене юсама, тасатма тытăннă.

Анчах та çак ĕçе тума республикăри чылай районсенче пачах та тытăнман-ха. Райçĕрĕç пайĕсем енчен те ку тĕлĕшпе колхозсене ертсе пыни çук. Иккĕмĕш районĕнчи колхозсенче витнĕ итемсем 232 шутланаççĕ пулсан, вĕсенчен юсавлисем 197 çеç. Ыттисене тĕпренех юсамалла. Çапла пулсан та, паянхи куна ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаман-ха. Райçĕрĕç пайĕ хускални те курăнмасть. Пĕр «Серп и молот» тата «Ыраппулăх» колхозсем кăна хăйсен витнĕ итемĕсене тасатса, юсаса хатĕрленĕ. Чкаловски районра тырă типĕтмелли сушилкăсем пурĕ 82 кирлĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем 12 çеç. Çĕнĕрен тума тытăнман-ха, 77 витнĕ итемрен 32-шне кăна юсаса хунă. Канаш районĕ колхозсенчи витнĕ итемсене ремонтлас тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе план тунипех лăпланнă, ăна пурнăçлас енĕпе нимĕнле ĕç те туман.

Вырăнсенчи партипе совет оргăнĕсен, коммунистсемпе комсомолецсен ялсовет тата райсовет исполкомĕсен çак ответлă ĕçе массăна халех мобилизацилемелле. Тырăсене вырма тухиччен колхозсен итемĕсем çинче, кĕлечĕсенче тасалăхпа йĕркелĕх тăвас пулать. Кашни пĕрчĕ тырра ним хăвармиччен пуçтарса кĕме хатĕрленес пулать.

Пирĕн машинно-тракторнăй станцисемпе колхозсенче авăн çапмалли машинăсем çителĕклĕ таранах пур. Иртнĕ çул вĕсемпе эпир туллин усă курма пултараймарăмăр, çавăнпа та ĕнтĕ авăн çапас ĕçе вăрăма ярса тырпула нумай тăкаларăмăр. Çапма тытăниччен, авăн çапмалли машинăсене пурне те тырă вырма тухиччен юсаса вырнаçтарса лартмалла. Ку тĕлĕшпе колхозсене машинно-тракторнăй станцисем уйрăмах пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ.

Партипе правительство колхозниксене ялхуçалăх ĕçĕсенче пулăшма пулассенчи ĕçрен пушă халăха, вăтам тата туллимар вăтам шкулсемпе техникумсенче вĕренекен çамрăксене ĕçе мобилизацилеме хушрĕç. Республикăри колхозсен уйхирĕсенче мобилизаци йĕркипе 35 пине яхăн çын ĕçлемелле. Вĕсенчен нумайĕшĕ колхозсене ĕçлеме тухнă та ĕнтĕ. Çак вăйпа туллин усă курса, кăçал пирĕн колхозсем тырăсене пухса кĕрес, авăн çапас ĕçе уйрăмах организованно туса ирттермелле.

—о—

Физкультурниксен спартакиадисем

ВЦСПС решенийĕ тăрăх июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшне çитиччен предприятисемпе учрежденисенче тата вĕренӳ заведенийĕсенче физкультурниксен гимнастика, шывра ишесси, штыкпа тăрса çапăçасси, çăмăл атлетика, футболпа городоксем енĕпе спартакиадăсем пулса иртесçĕ. Физкультурниксем ăмăртăва производствăран татăлмасăр хутшăнаççĕ. Чи лайăх пĕлĕхсем кăтартнă физкультурниксен командисене тата уйрăм физкультурниксене призсемпе грамотăсем параççĕ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Июлĕн 2-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Июлĕн 2-мĕшĕнче **Курск** енче пирĕн войскăсен танкĕсем кунĕпех противникăн танкĕсене хирĕç вăйлăн çапăçнă.

Белгород тата Волчанск енĕсенче пирĕн войскăсем нимĕçсен наступлени тăвакан фашистла войскисене хирĕç вăйлă çапăçусем пуçласа янă.

Фронтăн **Севастополь** участокĕнче пирĕн войскăсем хула хĕрринчи противника хирĕç штык вĕççĕн хаярлăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Июлĕн 1-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен темиçе вуншар танкĕсене, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 300 автомашинине ытла, боеприпассем тиенĕ 40 лава яхăн пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне тата горючи складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине 4 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн танковăй часть противника хирĕç вăйлăн çапăçнă. Пирĕн танкистсем пĕр кун хушшинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă, противникăн 16 танкне çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă. Çав çапăçура командир Кановин юлташ хăйĕн танкĕпе нимĕçсен 4 машинине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсен 50 танкĕ пирĕн войскăсем вырăнаçса тăракан вырăна шăтарса кĕме хăтланнă. Старши лейтенант Шанцевăн истребительнăй отрядĕнчи хастарлă 9 бронебойщик, вĕсем çине пеме тытăнса, нимĕçсен 7 танкне çунтарса янă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн уйрăм участокĕсенче пирĕн чаçсен артиллерийĕ нимĕçсен 10 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрсе тăкнă, мина хурса тухнă хире сирпĕнтерсе янă, минометсен 5 батарейине тата артиллерин пĕр батарейине пусарса лартнă, тăшманăн пехотин темиçе ушкăнне, пĕрле илсен 3 батальона çити хисепленекенсерсене, сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Противникăн пехоти, авиаципе 40 танк пулăшса пынипе, Калинин фрончĕн пĕр участокĕнче наступлени пуçласа янă. Питĕ пысăк çухатусем тӳссе, гитлеровецсем пирĕн боевой охраненине каялла чакарнă та высотана йышăнса илнĕ. Тарасов юлташ командир пулса тăракан чаçри боецсем, противника хирĕç пырса çапса, ăна каялла сирсе янă, çав высотана çĕнĕрен йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 6 танкне çĕмĕрнĕ, пĕр бомбардировщикне персе ӳкернĕ. Гитлеровецсен 200 салтакпа офицер ытла вилсе е аманса юлнă.

* * *

Ленинград фрончĕн пĕр участокĕнче кĕрешекен часть 3 кун хушши пынă çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити пĕтерсе тăкнă, пулеметсен 4 огневой точкине тата боеприпассемпе продовольстви тиенĕ обоза пĕтерсе тăкнă. Пирĕн артиллеристсем минометсен пĕр батарейине тата артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Боецсем Чуб тата Бригневич юлташсем винтовкăран персе нимĕçсен пĕр самолетне ӳкернĕ. Тепĕр участокра красноармеецсен пĕр ушкăнĕ пăшалсемпе пулеметсенчен персе «Мессершмитт—109» йышши самолета ӳкернĕ.

* * *

Белоруссин Минскпа Полесски облаçĕсенче тăракан партизансен темиçе отрячĕ хăйсем çапăçма пуçланăранпа мĕнпурĕ 3.000 нимĕç оккупантне çити пĕтерсе тăкнă. Партизансем противникăн чугунçул çинчи 13 эшелонне крушени тунă, 140 автомашинăна тата боеприпассем, горючи, продовольстви хунă складсене вуншар склада пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 7-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 61-мĕш полкĕн 11-мĕш ротинчен тытăнна лекнĕ салтак Иозеф Крексгаммер çапла каласа панă: «Хĕлле 7-мĕш дивизи питех те пысăк çухатусем тӳсрĕ. Полксем халсăрланса çитнĕ. Ротăсенче çын питĕ те сахал тăрса юлнă. Сăмахран, 11-мĕш ротăра мĕнпурĕ те 30 салтак çеç шутланнă. Апрель уйăхĕнче çынсем хушса пачĕç, пирĕн ротăна 100 çын пачĕç. Июнĕн 28-мĕшĕнче çав дивизин чаçĕсем вырăссен позицийĕсене атакăласа, оборона енчен паха рубежа тытса илме хăтланчĕç. Атакăсем пĕри те ăнăçмарĕç. Пире пысăк çухатусем тӳстерчĕç. 11-мĕш ротăран мĕнпурĕ те 10 аманнă салтак çеç чĕрĕ тăрса юлнă».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хăйсем оккупациленĕ совет районĕсенче мирлĕ халăха пĕтерсе пыраççĕ. Июнĕн 11-мĕшĕнче гитлерла бандитсем Смоленск облаçĕнчи Кузьмино ялĕнчи хĕрарăмсемпе стариксене тата ачасене, 80 çынна шурлăха хăваласа кĕртнĕ те вĕсене автоматсенчен персе вĕлернĕ. Нимĕç захватчикĕсем Шиловичи ялĕнчи хресченсене нимĕн юлмиччен çаратса тухнă, çуртсемпе хуралтăсене пурне те çунтарса янă. Çар влаçĕсем хушнипе гитлеровецсем çитĕнсе çитмен ыраша утă валли çулаççĕ, çапла майпа халăха выçă вилĕмпе вилмелле туса хăвараççĕ.

Июлĕн 3-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Июлĕн 3-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле **Курск, Белгород тата Волчанск** енĕсенче пирĕн войскăсем противника хирĕç çапăçнă.

Фронтăн **Севастополь** участокĕнче çапăçусем хула урамĕсенче пулса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Курск енче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Çав çапăçусенче пирĕн войскăсем противника пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен пĕр талăк хушшинче кăна темиçе пин салтакпа офицер вилнĕ. Пысăк çухатусем туса, гитлеровецсем Б. ялĕн кăнтăр енчи хĕррине çĕмĕрсе кĕме пултарнă. Бурдаков юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем, контратака туса, противника каялла сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 100 çын ытла вилнĕ тата аманнă. Пискарев лейтенантăн батарейи пĕр кун хушшинче противникăн пехотине 2 батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен чылай пысăк пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн Курск енче кĕрешекен авиаци нимĕçсен темиçе вуншар танкне, 200 автомашинине çити, 15 зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă тата противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă. Сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 20 самолетне персе ӳкернĕ тата 5 самолетне аэродромсем çинче пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕç пехотин батальонĕ пирĕн пĕр чаçăн позицийĕсене атакăланă. Гвардеец-артиллеристсем хăйсен орудийĕсенчен персе гитлеровецсене çĕр çумне лапчăнтарса хунă, 2 станковăй пулемета, минометсен батарейине тата противникăн 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсен 3 танкĕ Козыревăн оруди расчечĕн тылне кĕрсе кайнă. Тĕл персе, гвардеец-наводчик нимĕçсен 2 танкне çĕмĕрнĕ. Виççĕмĕш танкĕ каялла çавăрнса кайнă, анчах та тарса ĕлкĕреймен. Пирĕн снарядсенчен пĕри унăн башнине çĕмĕрнĕ. Нимĕç автоматчикĕсем çав çĕмĕрнĕ танксем çинчен сиксе аннă та тарма хăтланса пăхнă. Артиллеристсем шрапнельпе персе 40 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Митрофанов юлташ командир пулса тăракан чаçри минометсен батарейи çак юлашки кунсенче противникăн зенитнăй орудине пĕтерсе тăкнă, 3 блиндажне çĕмĕрсе парахнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Лейтенант Игнатенко командир пулса ертсе пыракан боецсен разведка тăвакан ушкăнĕ, нимĕçсене кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, 2 пулемет тата 30 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен «Смерть немецким оккупантам» ятлă отрячĕ противникăн çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Войскăсем ларса пыракан 14 вагона тата бронемашинăсем тиенĕ 3 платформăна çĕмĕрнĕ. Крушенире 300 оккупанта çити пĕтнĕ.

* * *

Украинăри партизансен М. юлташ командир пулса ертсе пыракан отрячĕ июнь уйăхĕн вĕçĕнче эсэсовецсен ротине аркатса тăкнă. Партизансем нимĕçсенчен 10 пулемет, 81 винтовка, 2 миномет, 7 пистолет, 12.000 винтовка патронĕ, тумтирсем тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Курск енче нимĕçсен 45-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тытăнна илнĕ салтак Тюхлер çапла каласа панă: «Наступлени тума калакан приказа салтаксем ӳпкелешсе кĕтсе илчĕç. Пире эрех ĕçтерсе ӳсĕртрĕç те малалла хăваларĕç. Наступлени тăвакан пехота хыçне пулеметсем тăратрĕç, çав пулеметсем чарăнакана е каялла çаврăнса каякана çийĕнчех персе вĕлерме хатĕр тăнă. Наступлени тума хатĕрленме тытăнсассăн, манăн ротăран 2 салтак тарса кайрĕç. Июнĕн 30-мĕшĕнче пирĕн ротăна çапса аркатрĕç, вара вăл тĕрĕксипе пĕтсе ларчĕ. Вăл ротăра 18 çын çеç тăрса юлчĕ».

* * *

Çапăçу хирĕнче нимĕçсен çар врачĕ Вальтер Баум Майн çинчи Франкфуртра пурăнакан хирург патне яма çырнă çырăва тупнă. Вăл çырура çапла каланă: «...Эпĕ вилес пек ывăнтăм. Пире Россиăра хĕн курма тивнĕ пек нимĕнле врачăн та нихăçан та, нийçта та хĕн курма тивмен-ха. Виçĕ уйăх хушшинче эпĕ аманнă тата чирленĕ 9.000 çынна яхăн пулăшу патăм. Йывăр аманнă çынсем — вĕсем ĕнтĕ вилме çырнă çынсем. Вĕсем чĕреллех çĕреççĕ, вĕсем çине пурте чăрмав çине пăхнă пек пăхаççĕ. Хăшĕ-пĕри сестрасене тата врачсене хăйсене наркăмăш пама, çапла майпа асапсенчен ĕмĕрлĕхе хăтарма ыйтаççĕ... Госпитальсемпе лазаретсем аманнисемпе лăках тулнă. Медикаментсем çук. Кашни кун эпир масара темĕн чухлĕ тупăк ăсатапăр... Çынсем ютçĕршывра хăйсен вилĕмне тупмалăх пин километр ытла килнĕ пулать... Ку ĕнтĕ ытла та ăссăр япала».

* * *

Герсталь хулинчи çар завочĕн (Бельгия), Германи çарĕ валли продукци туса кăларакансенчен, пăхăр çитменнипе ĕçлеме пăрахмалла пулнă.

Партизансен крайĕнчи пĕрремĕш партконференци И. В. Сталин тата А. А. Жданов юлташсене янă салам

Мускав, Кремль, Иосиф Виссарионович СТАЛИНА

Ленинград, Смольный, Андрей Александрович ЖДАНОВА

Эпир, Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ территорийĕнче тăракан партизансен крайĕнчи коммунистсем, пĕрремĕш конференцие пухăннăскерсем, Сире, пĕтĕм чĕререн тухакан хĕрӳллĕ большевикла салам яратпăр.

Сталин юлташ 1941 çулти июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă кăйĕн сăмахĕнче хамăрăн халăха тăшман оккупациленĕ территори çинче пур çĕрте те нимĕç захватчикĕсене хирĕç партизанла вăрçă чĕртсе яма чĕннĕренпе çулталăк тултарать. Совет çыннисем юратнă çулпуçăн сăмахĕсенче нимĕç тылĕнче кĕрешмешкĕн хăйсене валли программа илчĕç. Сталин юлташ пире тăшман çарĕсен чаçĕсене хирĕç кĕрешме партизансен утлă тата çуран отрячĕсене тума, диверсиллĕ группăсем тума чĕнчĕ, тăшманăн телефон тата телеграф çыхăнăвне татса тăкма, вăрмансене, складсемпе обозсене вут тивертсе çунтара-çунтара яма чĕнчĕ. Çулпуç: «Тăшман тытса илнĕ районсенче тăшманшăн тата ăна пулăшакансемшĕн пуриншĕн те тӳсме çук условисем туса хурас пулать, вĕсене кашни утăмрах йĕрлес тата пĕтерсе тăкас пулать, вĕсен мĕнпур мероприятийĕсене аркатса ярас пулать» тесе чĕнни çине кашни совет патриочĕ хăйĕн мĕнпур чун-чĕринчен ответлерĕ.

Германи çарĕн тылĕнче пирĕн районсем пулса тăнăранпа вунă уйăх иртрĕ. Çав уйăхсем пире нумай ĕçе вĕрентрĕç. Эпир иксĕлми вăй пулса тăнине шанса тăма кавхалантарчĕç. Пирĕн вунă уйăх каярах тунă пысăк мар тата пĕр-пĕринчен уйăрălса тăракан партизанла отрядсем кайран партизансен полкĕсемпе бригадисем пулса тăчĕç, вĕсем хĕçпăшалсем тĕлĕшпе пуян, автоматсемпе, пулеметсемпе, минометсемпе, танксене хирĕç пемелли пăшалсемпе тата артиллерипе лайăх хĕçпăшалланнă.

Вунă уйăх каярах эпир пуринчен ытларах вăрманта вырнаçса тăнă, нимĕçсене хăшпĕр ялтан вăхăтран вăхăта çеç хăвала-хăвала кăларнă. Халĕ ĕнтĕ эпир халăх пурăнакан нумай пунктсемлĕ пысăк территорие оккупантсенчен пĕтĕмпех тасатрăмăр. Пирĕн совет стройĕ, пирĕн совет йĕркисемпе йăлисем халăхсен масси хушшинче тарăн тымар янине пула, эпир хамăрăн партизансен крайĕнчи совет оргăнĕсене пĕтĕмĕшпех ура çине тăратрăмăр. Ĕççыннисем колхозсемпе артельсенче тата мастерскойсенче геройла ĕçлесе ылханлă тăшмана пĕтерсе тăкмалли çĕнтерĕве пуппаççĕ, партизансен чаçĕсене хĕçпăшалсемпе продовольстви парса тăма çирĕп никĕс тăваççĕ. Гитлеровецсен хăйсем тытса илнĕ совет çĕрĕсене алла илме вăйĕсем çитмеççĕ, сăмахран, вĕсем пирĕн крайăн хĕçпăшаллă хăватне хирĕç кĕрешме пултараймаççĕ. Нумаях пулмасть эпир нимĕçсем ярăкан нумай карательнăй экспедицисен атакисенчен пĕрине сирсе пăрахрăмăр. Ку расра Германин командованийĕ пире хирĕç хăйсен темиçе пин салтакĕсемпе офицерĕсене, 30 танкне ытла, хăйсен авиацийĕпе артиллерине тата минометĕсене кĕртсе янă. Вăйлă çапăçусенче эпир çав карательсене аркатса тăкрăмăр тата малтанхи пекех хамăрăн крайăн хуçисем пулса тăратпăр.

Эпир хамăрăн çитĕнӳсене пысăклатмастпăр, тискерленсе кайнă тăшманăн вăйĕсене те пĕчĕклетместпĕр, анчах та çакна лайăх пĕлсе тăратпăр: фашистсене хирĕç пыракан хĕрӳллĕ кĕрешӳсенче пирĕн çынсем никам хăратайми пулса тăчĕç, пирĕн отрядсем фашистсен ылханлă мерзавецĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хаяр аçа-çиçĕм пулса тăчĕç.

Большевиксен çирĕплĕхне танксен бронипе те, хĕртнĕ тимĕрпе те хавшатма çук. Большевикăн чĕри хурçăран çирĕпрех.

Партконференци, пирĕн крайри партизансемпе ĕççыннисен шухăш-кăмăлĕсене каласа парса, Совет Союзĕнчи халăхсен çулпуçĕн Сталин юлташăн приказне вĕçне çитиччех пурнăçа кĕртме хатĕр тăни çинчен пĕлтерет. Эпир нимĕç захватчикĕсен тылĕнче партизансен вăрçине вăйлататпăр, тăшманăн çыхăнăвĕпе транспортне аркатса пырăпăр. Пирĕн çĕршыва пусмăрлакансене хирĕç эпир патронсем шеллесе тăмăпăр.

Нимĕç захватчикĕсен тылĕнчи хаяр обстановкăра туса ирттеретпĕр эпир хамăрăн партконференцие. Эпир хамăрăн партизанла края хамăр халăхăн чи лайăх ывăлĕсен юнĕпе тăшманран çĕнтерсе илтĕмĕр, çав крайри çĕрсен кашни пусăмне кулленхи çапăçусенче хӳтĕлесе тăратпăр. Пирĕн крайра пĕртен-пĕр большевик чĕрĕ юличчен урса кайнă тăшмана хирĕç пыракан кĕрешӳ пĕр кунлăха та лăпланмĕ тесе эпир тупа тăватпăр. Эпир хамăрăн алăра çапăçури хĕçпăшала çирĕппĕн тытатпăр тата ăна пирĕн тăван çĕр çинче пĕр оккупант юлмиччен аларан ямастпăр.

Сывă пултăр пирĕн çĕнтерӳ!

Никам çĕнтерейми аслă совет халăхĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр пирĕн учитель тата çулпуç, пирĕн юратнă атте, пирĕн тусăмăр Сталин!

Социализмлă ăмăрту вăйланса пырать

ШĂХАСАН, июлĕн 3-мĕш. (**Телефонпа**). Шăхасан машинно-тракторнăй станцийĕ çулталăкри ĕç планне, авăн çапассине шута илмесĕр, 68 процент тултарчĕ. Çемçе суха шучĕпе пурĕ 19.014 гектар сухаламалла пулнă пулсан, июлĕн 1-мĕш тĕлне тракторсемпе 12.967 гектар сухаланă. Ирхи çĕртмене планра кăтартнă 4.600 гектар вырăнне июлĕн 1-мĕш тĕлне 6.158 гектар сухаланă, ĕç планне çапла 135 процент пурнăçланă.

Трактористсен ĕçри хастарлăхĕ кунран кун ӳссе пырать. Пĕтĕм ĕçе ăмăртса туса пырса, чылай бригадăсем пысăк тухăçлăхпа, паха ĕç тĕслĕхĕсем кăтартса ĕçлеççĕ. Поликарп Морозов юлташ бригадир пулса ертсе пыракан 7-мĕш номерлĕ бригада хăйĕн çулталăкри ĕç планне (авăн çапассине шута илмесĕр) июнĕн 1-мĕш тĕлне 114,8 процент тултарчĕ. Бригадăн çулталăкра тракторпа тумалли ĕçсен планĕ (авăн çапассине шута илмесĕр) 1.065 гектар пулсан, вăл 1.228 гектар сухаланă, сӳреленĕ, акнă. Çак ĕçре горючи тата сĕрмелли япаласене 2.077 килограмм перекетлесе хăварнă.

Трактор бригадин ĕçĕнчи çитĕнӳсем трактористсем ĕçĕн ответлăхне туйса ĕçленипе, Сталин юлташăн май уйăхĕнчи историллĕ приказне пурнăçа кĕртессишĕн кашни тракторист пĕтĕм вăйпа ĕçленипе пулнă. Морозов юлташ ертсе пыракан бригадăри трактористсем тракторăн вăйĕпе туллин усă кураççĕ. Тракторсене кунта таса, юсавлă тытаççĕ. Çавăнпа кунта кашни тракторăн ĕç тухăçлăхĕ те пысăк.

Матвей Гаврилов тата Нина Иванова трактористсем СТЗ маркăллă тракторпа ĕçлеççĕ. Ĕçре кашни сехете шута илсе тухăçлăн ĕçленипе вĕсем июлĕн 1-мĕш тĕлне хăйсен тракторĕпе 462,4 гектар сухаланă, ку вăл Гавриловпа Иванова трактористсем хăйсен çулталăкри ĕç планне 131,3 процент тултарни пулать. Вĕсем çав хушăра 694 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Çавăн пекех 6-мĕш номерлĕ бригадăри трактористсем те стахановла ĕçлеççĕ. Ку бригада та хăйĕн çулталăкри ĕç планне ирттерсе пурнăçланă, горючине 2.313 литр перекетлесе хăварнă. Стахановец-трактористсем Г. Алексеевпа В. Васильева юлташсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçласа пыраççĕ. Хăйсен çулталăкри ĕç планне вĕсем чылай ирттерсе тултарчĕç, тухăçлăн ĕçленипе вĕсем çак хушăра 1005 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕç.

Халĕ МТС-ра комбайнсемпе молотилкăсене юсас ĕç хĕрӳллĕн пырать. 14 комбайнран 10-шне юсаса пĕтернĕ, ыттисене çак кунсенчех юсаса çитеретпĕр. 20 молотилкăран 15-шне юсаса çитернĕ. Трактористсем çĕртме пуссине культивацилеме тытăнчĕç. Ĕçре социализмлă ăмăрту вăйланса пырать. МТС коллективĕ кăçалхи ялхуçалăхĕнчи ĕç планне ирттерсе пурнăçлассишĕн тимлĕн ĕçлет.

Ф. ИШУТОВ,
МТС политотделĕн начальникĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

ГОСУДАРСТВО НУМАЙ АЧАЛЛА ХĔРАРĂМСЕНЕ ПАНĂ ПУЛĂШУ

Совет Союзĕн Финанс Халăх Комиссариатĕнче Совет Союзĕнчи нумай ачаллă хĕрарăмсене мĕн чухлĕ пособи панине шутласа кăларнă. 1942 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 1-мĕшĕччен нумай ачаллă хĕрарăмсене 368,5 миллион тенкĕлĕх пособи панă.

ÇĔНĔ РАЙОНСЕНЧЕ НЕФТЬ ШЫРАМА

Нефть Халăх Комиссариачĕ нефтьлĕ çĕрсене тупма тата вĕсене тĕпчесе пĕлме Пенза, Саратов тата Ярославль облаçĕсене комплекслă экспедици янă. Экспедицин геологи енĕпе ĕçлекен отрячĕсемпе тĕпчесе вĕренекен отрячĕсем ĕçе тытăннă ĕнтĕ. Вăл отрядсенче Совет Союзĕнчи Наукăсен Академийĕн институчĕсем хутшăнса ĕçлеççĕ.

ХУЛАСЕНЧИ ПИНШЕР ÇЫНСЕМ КОЛХОЗСЕНЕ ĔÇЛЕМЕ КАЙНĂ

Горький облаçĕнчи хуласенчи çынсем 40.000 çын ытла ĕнтĕ хирсенче çум çумлаççĕ тата утă çулаççĕ. Колхозниксем вĕсене пур çĕрте те хаваслăн кĕтсе илеççĕ. Çитес рăхăтра колхозсене уборка ĕçĕнче ĕçлеме Горький облаçĕнчи хуласенчен тата 50 пин çын пухса каймалла. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлеççĕ

ШĂХАСАН. (**Хамăр корр.**). Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса парасси районри колхозсенче кунран кун ӳссе пырать. Район центрĕнчи «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз паянхи куна 88 тир, 34 килограмм çăм, 24 алшăлли тата ытти япаласем те пухса панă. Колхоз председателĕ Д. Степанов юлташ хăй пĕччен 6 килограмм çăм, пĕр тир панă. Ытти колхозниксемпе колхозницăсем те пысăк активлăх кăтартаççĕ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. Ӳкерчĕк çинче: Казаксем атакăра.

М. РЕДКИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Çулйĕр строительствине васкатас пулать

ЭЛĔК. Хитекуккĕнчи «Çĕнĕ çул» колхоз членĕсем çулйĕр строительстви тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ панă плана 8 кун хушшинчех 110 процент тултарчĕç. Колхозăн 400 кубометр çĕр ĕçĕ тумаллаччĕ, колхозницăсем 437 кубометр тунă. Вăл шутран 12 кубометршăн тивекен тупăша оборона фондне панă.

Колхозниксемпе колхозницăсем çулйĕр строительствинче тухăçлăн ĕçлерĕç. М. Боброва, М. Степанова, А. Семенова тата М. Антонова юлташсем куллен ĕç нормине 140 процент таран тултарса пычĕç. Ĕçлекенсем валли пĕрлешӳллĕ столовăй организациленĕ, ĕç хатĕрĕсем те çителĕклĕ пулнă.

Анчах та çулйĕр строительствинче районри пур колхозсем те çакăн пек йĕркеллĕн ĕçлемеççĕ-ха, уйрăмăнах Изванкăри «13 лет РККА» тата Уйкасри Буденный ячĕпе тăракан колхозсен ку тĕлĕшпе ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Çулйĕр строительстви валли вĕсем ĕç вăйĕ çителĕклĕ парса тămаççĕ. Ĕçлекенсем те ĕçкунĕпе туллин усă курмаççĕ: ирхине ĕçе кая юлса тухаççĕ, каçхине ир кĕреççĕ.

Çулйĕр строительствинче çакнашкал ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлени пулмалла мар. Çулйĕр строительствин планне тырпула пухма тытăничченех пурнăçламалла.

М. КУСТИНОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Танксен Курск енчи пысăк çапăçăвĕсем

КУРСК ЕНĔ, июлĕн 2-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Курск енчи пур участоксенче те çапăçусем вăйланнăçемрен вăйланса пыраççĕ. Совет воинĕсем хăйсен позицийĕсене çирĕппĕн хÿтĕлесе тăраççĕ тата нимĕçсене хирĕç контратакăсем тăваççĕ, [illegible].

Пĕр юханшыв патĕнчи çапăçусем уйрăмах хĕрÿллĕн пулса иртрĕç. Çак юханшыв çыранĕсем [illegible] пирĕн часть унта оборона йĕркеленĕ. Противник çапăçа танксемпе авиаци нумай кĕртсе янă. Çак участокра пирĕн пĕр часть кăна тăшманăн нумай танкĕсене пĕтерсе тăкнă. Тепĕр часть икĕ кун хушшинчи çапăçусенче фашистсен 19 орудине, 27 пулеметне, 19 минометне стройран кăларнă тата нимĕç пехотин пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă.

Техникăн чĕрĕ вăй енчен çавтери пысăк çухатусем тунине пăхмасăр, тăшман ытти участоксенчен илсе килнĕ çĕнĕ чаçсене тата иккĕмĕш эшелон чаçĕсене çапăçа кĕртсе ярать, [illegible].

Çапăçу хирĕнче нимĕçсен çĕмрĕк танкĕсем нумай выртаççĕ. [illegible] пехотинецсене стройран кăларнă. Вĕсем танкĕсене пехотпа [illegible] гранатăсемпе тата горючи бутылкăсемпе пĕтереççĕ.

Пирĕн бронебойщиксем тата артиллеристсем паттăррăн кĕрешеççĕ. Пĕр участокра кăна бронебойщиксем 16 танка пĕтерсе тăкнă.

Тăшманăн атакăна кĕрсе кайнă утлă çарне сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

Çапăçу пынă вăхăтра хăшпĕр лайăх позицисем темиçе хут та аларан-алла куçнă. Ĕнер паттăр воинсем нимĕçсене виçĕ ялтан хĕссе кăларчĕç, трофейăсем тытса илчĕç, тыткăна илнисем пур. Паян кунта çапăçусем малтанхи пекех хĕрÿллĕн пулса пыраççĕ. Артиллерирен тата миномецсенчен персе тăнипе хÿтĕленсе, пирĕн подразделенисем тăшман çинелле ывтăнаççĕ. Час-часах штык вĕççĕн тытăçса çапăçаççĕ. Тăватă кун хушши пынă çапăçусенче нимĕç дивизийĕсем нумай пиншер салтаксемпе офицерсене çухатрĕç.

Тыткăна лекнисем çирĕплетсе панă тăрăх, гитлеровецсем çавтери пысăк çухатусем тÿсеççĕ. Нимĕçсен 539-мĕш тата 557-мĕш пехотнăй полкĕсем çуррине яхăн стройран тухнă.

Фашистсем хăйсен авиацийĕн активлăхне пĕрмаях вăйлатаççĕ. Тăшман самолечĕсен пысăк ушкăнĕсем пирĕн малти линине атакăлаççĕ, мирлĕ халăх пурăнакан пунктсем çине бомбăсем пăрахаççĕ. Совет летчикĕсем тăшман авиацине хирĕç сывлăшра вăйлăн çапăçаççĕ, ăна пысăк çухатусем кÿреççĕ. Противникăн танкĕсен колоннисемпе мотопехотин колоннисем çине хăюллăн тапăнса, пирĕн самолетсем нимĕç танкĕсене, автомашинисене тата пехотине стройран кăлараççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

Виçĕ кун пынă çапăçу

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, июлĕн 2-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Çĕрле противник кĕтмен çĕртен пирĕн оборонăн малти линийĕ çине артиллерирен вăйлăн пеме тытăннă. Çав вăхăтрах вăл иккĕмĕш эшелона [illegible] ларас тесе [illegible]. Çапла унăн умне пирĕн подразделенисем [illegible] гарнизонсене пулăшма [illegible]. Фашистсем пĕтĕм тавраври [illegible] контролĕ [illegible].

Артиллерирен персе тăнă хыççăн, нимĕçсен пехоти наступлени пуçласа янă. Пирĕннисем гитлеровецсене вут-çулăм сутарса кĕтсе илнĕ. Унтан пирĕн подразделени нимĕçсемпе штык вĕççĕн çапăçма тытăннă.

Фашистсен пĕр ушкăнĕ çапах та пирĕн пĕр дзот патне çитнĕ. Рота командирĕ кĕçĕн лейтенант Клейман икĕ боецпа пĕрле çав дзот патне пырса тухнă та, гранатăсем ывăтса, 6 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Çав дзота йышăнса илсе, кĕçĕн лейтенант противник çине пулеметран пеме тытăннă. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ, çапах та малалла кайма тăрăшма пăрахман. Каçпала, наступлени пуçласа яни талăка яхăн иртсен, фашистсем хăйсен çĕнĕ резервĕсене илсе пырса çĕнĕрен атака тума вăйсем пуха пуçланă. Анчах та пирĕн артиллери харăссăн та вăйлăн пеме тытăнни тăшманăн войскисен çапăçма • хатĕрленĕ йĕркисене аркатса янă.

Çапăçу пуçланнăранпа иккĕмĕш çĕр çитнĕ. Нимĕçсен вуншар ÿсĕр автоматчикĕсем пĕтĕм ÿт-пĕвĕпе тăрса атакăна кайнă. Вĕсем тĕллемесĕррех пенĕ. Пирĕннисем çав автаматчиксене пурне те пĕтерсе тăкнă.

Тăшман паха рубежа йышăнса илме хăтланни, çапла, ăнăçман. Виçĕ кун хушши ăнăçсăр наступлени туса, гитлеровецсем темиçе çĕр салтакпа офицера çухатнă.

Е. КАПЛАНСКИЙ.

Пирĕн землянсем

МАТТУР ПУЛЕМЕТЧИК

Иван Ефимов 1913 çулта Етĕрне районĕнчи Тури Мучарта çуралнă. 1930 çулта вăл колхоза кĕнĕ. Хĕрлĕ Çара 1940 çулта кайнă. Хĕрлĕ Çарта вăл ВКП(б) членне илнĕ.

Çапăçусенче Ефимов хăй маттур пулеметчик, хăюллă, чăтăмлă, хастарлă боец пулнине кăтартнă.

... Ефимов тĕмесем хушшине шуса пырать. Аллинче унăн ручной пулемет. Пулемет Ефимовран пысăкрах пек курăнать. Акă вăл пирĕн вырнаçтарма [illegible] ларать те окопсене пытаннă белофинсем çине пеме тытăнать. Унтан ытти боецсемпе пĕрле хăюллăн атакăна каять. Урра-а! тени янăраса каять. Белофинсем, пирĕн боецсем хĕснине чăтаймасăр, тараççĕ.

... Пĕрре, тарăн юр тăрăх вуншар километр кайнă хыççăн, Ефимов тăракан подразделени тăшманăн артиллери батарейине хÿтĕлекен гарнизона атакăланă. Ефимов хăйĕн пулеметĕнчен белофинсене канăç памасăр ăшаланă. Пирĕн боецсем виçĕ талăк çывăрмасăр, канмасăр çапăçнă. Ефимов хăй ыванни-не пĕрре те палăртман. Вăл ĕлĕкхи пекех хастарлăн та хаваслăн çапăçнă. Пĕр вăхăтра белофинсем пирĕн подразделение çавăрса илнĕ. Ефимов хăйĕн пулемечĕпе пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçса, пĕр чарăнмасăр персе, белофинсен атакисене сире-сире яма пулăшнă. Çав çапăçура тăшманăн батарейине пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, трофейăсем нумай тытса илнĕ, вăл шутра инçене перекен 4 оруди тытса илнĕ.

Çапăçусенче хастарлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Правительство Ефимов юлташа «За боевые заслуги» медаль парса наградăланă. Ефимов юлташ—чăваш халăхĕн тивĕçлĕ ывăлĕ—хăюллăн та паттăррăн çапăçса, тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкас куна çывăхартма пулăшать.

М. РЫБАКОВ.

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии" ятлă звенине тума 1.137 пин тенкĕ пухăннă

Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа пухас ĕç республикăра пысăк çĕкленÿпе пулса пырать.

Июлĕн 1-мĕш тĕлне республикăпе 1.133 пин тенкĕ пухăннă та ĕнтĕ. Çак районсем малта пыраççĕ: Пăрачкав районĕ — 119 пин тенкĕ пухнă, Чкаловски район — 107 пин тенкĕ, Çĕмĕрле районĕ — 81 пин тенкĕ, Сĕнтĕр районĕ — 76 пин тенкĕ, Элĕк районĕ — 71 пин тенкĕ пухнă.

Кайра Улатăр хулипе Улатăр районĕ сĕтĕрĕнсе пыраççĕ, вĕсем мĕнпурĕ те 6 пин тенкĕ çеç пухнă. Çавăн пекех тата Шăмăршă, Первомайски, Вăрмар тата хăшпĕр ытти районсем те кайра пыраççĕ-ха. Ку ĕçе вĕсен çитес вăхăтрах вăйлатса ямалла.

* * *

ЭЛĔК. Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенине тума укçа-тенкĕ пухасси районра ăнăçлăн пырать. Паянхи кун тĕлне районри ĕççыннисем самолетсен звенине тума банка 50.122 тенкĕ укçа хывнă. Кайри Хирлепри «Пионер» колхозри колхозницăсемпе колхозниксем самолетсен звенине тума 2.110 тенкĕ пухнă. А. Яковлев, И. Герасимов, Ф. Герасимов тата И. Федорова колхозниксем 100-шер тенкĕ панă. Колхоз пĕрлешÿллĕ фондран 500 тенкĕ пачĕ.

М. КУСТИКОВ.

Кросра

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Июнĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа 21-мĕшне çитиччен комсомолецсемпе профсоюз членĕсен çуллахи кросĕ пулса иртрĕ. Кроса пурĕ 1.772 çын хутшăннă, вĕсенчен 1.714 çын ГТО значокĕн нормине панă. Кроса хутшăннисенчен 437-шĕ—комсомолецсем, колхозниксем те йышлăн хутшăннă. Кроса уйрăмах район центрĕнче, Именево ялсоветĕнче, аван хатĕрленсе массăллăн хутшăнчĕç.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Англин общинăсен палатинчи пренисем

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палатин — консервативнăй партин членĕсен 18 депутачĕ (палатăри 387 консерватор-депутатран 18 депутат) Ливире Англи çарĕн ĕçĕсем ăнăçсăр пулнă пирки правительствăна шанманни çинчен калакан сĕнÿ панă.

Ĕнер палатăра çак ыйту тăрăх пренисем пуçланнă. Правительствăна шанманни çинчен калакан резолюцие Уордлоу-Милн панă. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, лару пуçламăшĕнче Уордлоу-Милна Египетри çапăçусем вĕçлениччен çав резолюцие пама тытăнса тăмашкăн ÿкĕтлесе пăхнă пулнă. Анчах та Черчилль, тăвăллăн ала çупса кĕтсе илнĕ çĕре туха, çапла каланă: «Ĕç çавтери шала кĕрсе кайрĕ пулсан тата çак ыйтăва тĕнчен мĕнпур пайĕсенче пĕр эрне ытла сÿтсе-яваççĕ пулсан, ман шухăшпа, решени йышăнассине кая хăварни ăна сÿтсе-явнинчен сиенлĕрех пулнă пулĕччĕ», тенĕ.

Çакăн хыççăн Уордлоу-Милн хăйĕн резолюцине парса ăна ăнлантарса панă. Çакă вăл,—тенĕ Уордлоу-Милн, — Англин Египетра çапăçакан офицерĕсене хирĕç калани пулмасть, центрти руководствăна хирĕç калани пулать. Уордлоу-Милн шухăшĕпе, пĕррĕмĕш йăнăш вăл — премьер-министрăн постне оборона министрĕн посчĕпе пĕрлештерни пулса тăрать. Вăл Британи çарĕсен главнокомандующийĕ пулма Глостерский герцога сĕнÿ панă. Çав сĕнĕве палата—кулса, лейбористсем тенкелсене куçарса тата депутатсем вырăнтан сасă парса кĕтсе илнĕ. Палатăна йĕркене кĕртсен, Уордлоу-Милн Англи çарĕн Инçетри Хĕвелтухăçĕнчи тата Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи, уйрăмах Ливири ăнăçсăр ĕçĕсен сăлтавĕсене тĕпчесе тĕрĕслеме ыйтнă. ССР Союзне тулли пулăшу парса пырас политикăпа хăй килĕшни çинчен пĕлтерсе, вăл Черчилль правительствине çакăн пирки айăпланă: Черчилль правительстви Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи çарсене кивелнĕ хĕçпăшалсем парса тăрать, тенĕ. Уордлоу-Милн çапла каланă: Тобрука парасси çинчен Каирта е Лондонра е тата Вашингтонра решени йышăннипе йышăнманни çинчен çĕршыв пĕлесшĕн, тенĕ.

Правительствăна шанманни çинчен калакан резолюцие хÿтĕлесе сăмах туха каланă адмирал Роджер-Кейс çапла пĕлтернĕ: Черчилль çар советникĕсене хыттăн тытакани çинчен тата вăрçа ертсе пырас ĕçе хăй аллине илни çинчен калаçнисем тĕрĕс мар. Кейс çакна кăтартса панă: флотпа авиацин чаçĕсем пĕрле хутшăнса тăвакан операцисенче Англин вăйĕсем ытларах пуласси çинчен Черчилль пĕлнĕ. Черчилль тинĕс-çар советникĕсен шухăшĕсем çине тимлĕхсĕр пăхни ăна сиен çеç кÿнĕ, Черчилль адмиралтействăра тахçанах тума кирлĕ улшăнусене тунă пулсан çĕршыв та, çавăн пекех тинĕс-çар флочĕ те питĕ кăмăллă пулнă пулĕччĕç. Тинĕс министерстви Вăтаçĕр Тинĕсри флота çителĕклĕ таран самолетсем пама пултарайманнине хыттăн сивлесе, Кейс çапла каланă: манăн ирĕксĕрех çакăнта сĕннĕ резолюци майлă тăма лекет, тенĕ. «Черчилль малашне те çĕршыва ертсе пыни кирлĕ, анчах та унăн политикăллă интересĕсене килĕштерес шутпа тунă правительствăна мар, чăн-чăн нациллĕ правительствăна ертсе пымалла».

Правительство ячĕпе тухса каланă пĕррĕмĕш оратор çар производствин министрĕ Литтлтон пулнă. Вăл хăйĕн сăмахĕн пуçламăшĕнче Уордлоу-Милнпа Кейс иккĕшĕ пĕр-пĕрне хирĕçленине палăртнă. Уордлоу-Милн,—тенĕ Литтлтон, — вăрçа ертсе пыракан центрти руководствăна Черчилль ытлашши нумай хутшăннă пирки ÿпкелешет. Кейс вара, пачах урăхла каларĕ, Черчиллĕн влаçа хытăрах тытмалла, терĕ. Пĕррехмĕшĕ вăрçа ертсе пыракан центрти руководствăра улшăнусем тума ыйтрĕ, иккĕмĕш вара çапла каларĕ: хĕçпăшаллă вăйсене ертсе пыракан центрти руководствăра тÿрремĕнех хăй тăракан Черчиллĕн нимĕнле обстоятельствăра та хăйĕн ответлăхĕнчен пăрăнмалла мар, терĕ.

Литтлтон малалла çапла кăтартса панă: Египетри çарсене хĕçпăшал парса тăрас тĕлĕшпе Англи правительстви мерăсем йышăннă. Англи артиллерийĕн юлашки вăхăтра шухăшласа кăларнă çĕнĕ йышши орудийĕсене татах та ытларах çĕнетсе лайăхлатни, вĕсене туса кăларас ĕçе вăйлатса пыни промышленноçри пысăк çитĕнÿ пулса тăрать. Июлĕн 1-мĕш тĕлне çак йышши орудисене Çывăхри Хĕвелтухăçне 850 оруди янă, анчах та халь пулса пыракан кампанин пуçламăшĕнче çав орудисенчен пысăк мар пайне кăна ĕçе кĕртнĕ пулнă. Литтлтон çакна кăтартса панă: Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи чаçĕсене пысăк радиуса перекен тата Германин чи пысăк танкĕсене хирĕç кĕрешме пултаракан орудисемпе хĕçпăшаллантарнă. Танксене хирĕç пемелли ятарласа тунă орудисем кăларас ĕçе йĕркеленĕ. Çав орудисене массăллăн туса кăларас ĕç питĕ çывăх вăхăтсенчех пуçланать. Танксене хирĕç пемелли çĕнĕ йышши татах та хăватлăрах орудисем туса кăларассине йĕркелетпĕр. Вĕсенчен пĕр пайĕ часах Англи войскисене хĕçпăшаллантарнă çĕре каять. Америкăн «Генерал Грант» ятлă танкĕсем Германин Роммель генерал усă куракан чи лайăх йышши танкĕсене хирĕç кĕрешме пултараççĕ, куçсăр пуçне, «М—4» йышши танксене халĕ ĕнтĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче массăллăн туса кăлараççĕ, вĕсем «Генерал Грант» йышши танксенчен чылай çĕнĕрех те лайăхрах танксем пулса тăраççĕ. Юлашки çапăçусенче тÿснĕ çухатусене пăхмасăрах, Окинлек генералăн аллинче халĕ те «Генерал Грант» йышши танксем чылаях пур. Кунсăр пуçне,—тенĕ Литтлтон,—çапăçу хирне кунран-кун çĕнĕ танксем пырса тăраççĕ.

Литтлтон çакна йышăннă: Англи войскисене Бенгазирен сирсе ывăтнă тĕп сăлтавсем тактикăллă йăнăшсенче, «Крюсейдер» йышши танксем пушхирте операцисем тума юрăхсăрринче тата Германи танкĕсен бронисем çирĕп пулнинче, вĕсем пысăк радиусра кĕрешме пултарнинче тăраççĕ. Пикировка тăвакан бомбардировщиксем пирки панă нумай ыйтусене хирĕç ответлесе, Литтлтон çапла каланă: тĕплĕн пĕлекен çынсем каланă тăрăх, пикировка тăвакан бомбардировщиксем Ливири çапăçусене пысăк улшăнусемех кÿме пултарайман; противникăн пикировка тăвакан бомбардировщикĕсем те чылай енчен усăсăр пулнă. Çакă вăл пушхирти уйрăм условисенчен килет. Пикировка тăвакан бомбардировщиксем пулманни Бир-Хакейма панин сăлтавĕ пулса тăнине çирĕплетсе паракан даннăйсем çук.

Англин вăрçăри стратегиллĕ тĕллевĕ Суэц каналне, Иракпа Иранри нефть промыслисене тата Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи туслă е союзлă халăхсене хÿтĕлесси пулса тăрать, тесе кăтартса панă малалла Литтлтон. «Стратегиллĕ питех те кирлĕ пунктсем паян хăрушлăх умĕнче тăраççĕ, анчах та вĕсене çухатман-ха. Пире кÿнĕ тĕп сиен çакă пулса тăрать: противник хăйĕн аэродромĕсене Хĕвелтухăçĕнче питех те шала кĕрсе кайса вырнаçтарчĕ, вăл пирĕн базăсем çине çăмăллăнах вĕçсе пырса бомбăсем пăрахма пултарать». Юлашкинчен Литтлтон çапла каланă: «Хăшпĕр йышши питех те кирлĕ хĕçпăшалсемпе снаряжени туса кăларас тĕлĕшпе эпир часах противникран иртсе кайăпăр», тенĕ.

Лейбористсен лидерĕ Артур Гринвуд, кăçалхи февраль уйăхĕнчен кабинет членĕ пулнăскер, çапла каланă: Литтлтон депутатсем панă ыйтусем çине татăклă ответ памарĕ, тенĕ. Çак тĕлĕшпе ĕненмелле ăнлантарса памасан, правительствăн позицийĕпе унăн авторитечĕ чылай сиенленеççĕ, тенĕ.

Унтан правительствăна шанманни çинчен калакан резолюцие хÿтĕлесе, консерватор Эрл Уинтертон тухса сăмах каланă. Вăл хăй 1935 çултанпа членра тăнă правительствăна вăл çителĕклĕ таран хĕçпăшал тупманнишĕн айăплама тивĕçлĕ тесе йышăннă. Анчах та «хальхи ăнăçсăр ĕçсен ответлăхĕ пĕтĕмĕшпе пулмасан та хальхи правительствăпа Черчилль çине ÿкет». Уинтертон çапла хушса каланă: «Пирĕн ăнăçсăрлăхсемпе пораженисем малалла та пулса пырсан, эпĕ, пĕтĕм правительство пăрахăçа тухассине кĕтмесĕр, çакна шанса тăратăп: Черчилль хăй-не-хăй хĕрхенмесĕр хăйĕн тусĕсенчен пĕрине çĕнĕ правительство туса йĕркелеме сĕнĕ, хăй çав правительствăра пĕр-пĕр вырăн йышăнĕ», тенĕ.

Правительствăна шанмалла мар тесе тăратнă резолюцие общинăсен палати сирсе янă

ЛОНДОН, июлĕн 2-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян общинăсен палатинче правительствăна шанмалла мар тесе тăратнă резолюци пирки пренисем малалла пулса пынă. Лару вĕçĕнче Черчилль тухса каланă, ăна ала çупса кĕтсе илнĕ. Унăн сăмахĕ сехет çурă пынă.

Черчилль тухса каланă хыççăн правительствăна шанмалла мар текен резолюци пирки сасăлама тытăннă. Общинăсен палати резолюцие нумайрах сасăпа сирсе янă, резолюцие хирĕç 475 сасă пулнă, резолюци майлă 25 сасă çеç пулнă.

—o—

Китайра çĕнĕ заем кăларнă

ЧУНЦИН, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС). Китай правительстви июлĕн 1-мĕшĕнче 1 миллиард долларлăх çĕнĕ заем кăларасси çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Çĕнĕ заемăн задачи—«бюджета баланслассипе, пурне те кирлĕ таварсен хакĕсене çирĕплетесси, укçа-тенкĕне çирĕплетесси, ирĕклĕ капиталсене ĕçе ярасси тата пĕрлешнĕ нацисем çĕнтерÿ тăвассине пулăшасси» пулса тăрать. Çĕнĕ заема кăларас ĕçре пулăшма Англия Китая 500.000 кĕрепенке стерлинг кивçен панă. Облигаци тытакансене çулталăкне 6-шар процент тÿлĕççĕ. Заема 1945 çултан пуçласа 10 çул хушшинче тÿлесе татмалла.

ШВЕЦИРЕ ФАШИСТСЕНЕ ХИРĔÇЛЕ ТУНĂ ВЫСТУПЛЕНИСЕМ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 30-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче Реттвиг хулинче фашистсене хирĕçле демонстраци пулса иртнĕ. Çав хулари халăх Швеци фашисчĕсем митинг тума хăтланнине пĕтерсе лартнă. Фашистсене хирĕç кĕрешекенсем фашистла хаçатсене çунтара-çунтара янă тата фашистсен ораторĕсен сăмахĕсене наци гимнĕ юрласа пусарнă.

Венгрипе Румыни войскисем хушшинчи çапăçу

ЛОНДОН, июлĕн 1-мĕш. (ТАСС). Румынирен килнĕ американецсенчен илнĕ сведенисем тăрăх, июнĕн 18-мĕшĕнче Трансильванире, Турд хули таврашĕнче, Клужран инçех мар вырăнта, Румыни войскисемпе Венгри войскисем малтанхи хут вăйлă çапăçса илнĕ. Бенгерецсем кĕтмен çĕртен тапăннă. Американецсем каласа панă тăрăх, çак икĕ çĕршыв хушшинчи сивчĕ лару-тăру хальхи вăхăтра нихăçанхинчен те ытларах палăрать.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ

требуются на постоянную работу: автомеханик, шофер, тракторист, конюх, грузчики на автомашины (3), грузчики на берегу Волги (5).

С предложением обращаться: гор. Чебоксары, Чувашская улица, ликероводочный завод.

3—1

УТЕРЯННУЮ ПЕЧАТЬ

Альгешевского сельпо Чебоксарского района считать с 26 июня 1942 года недействительной.

Правление.

Аслă утăм

Пирĕн боецсем ыран наступлени пуçласси çинчен пĕлтерекен приказа хаваслăн кĕтсе илчĕç. Пурте хăйсен пĕтĕм вăй-хăватне хурса фашистсене çĕмĕресси çинчен кăна ĕмĕтленеççĕ. Боецсем темиçе хутчен винтовкисене пăхса тухрĕç, пилĕкĕсене çыхнă патронташсем йăлтăртатса тăраççĕ, противогазсем вырăнлă, васкаса малалла чупнă чух вĕсем кансĕрлес çук. Машинине шанчăклă хупланă пулин те, шофер Степан Шкурупий ăна тепĕр хут пăхса тухрĕ. Хăй вăл П. хули таврашĕнчен. Тăван алшĕ-амăшĕ тĕрлĕрен кĕтмен сăлтавсемпе тăван килĕнчех тăрса юлнă.

— Старши политрук юлташ, машинă ытла çÿллĕ пирки ан иккĕленĕр. Ĕçрех сире эпĕ П. хулине çитиччен илсе çитерĕп.

— Унта çитсен? — кулса ыйтаççĕ боецсем.

— Унта вара пĕрре тÿнтерсен те пырать, эпĕ вырăнне пĕлсе тÿнтерĕп, çеккĕн кăна, киле кĕрсе тухăпăр, чей вĕретсе ĕçĕпĕр. Манăн унта çамрăк мăшăрăм пур...

Степан кĕсйинчи хутсем хушшинчен фотоÿкерчĕк кăларса кăтартать. Ăна вăл вунă хут та кăтартнă ĕнтĕ мана, çапах та çĕмĕрт пек куçлă, тулли сăнпитлĕ украинкăна, Степан пекех, хам та тунсăхласа пăхатăп.

— Кусем камсем тата?

— Ку ман пĕчĕккĕ шăллăм, кусем — аттепе анне. Пĕлместĕп ĕнтĕ, чĕрĕ-ши вĕсем, килтех-ши, пурăнаççĕ-ши?.. Степан шухăшпа кайрĕ. Тăван кил йыш ăна аса килчĕ.

Хĕвел вăрман хыçне анса ларчĕ. [illegible]хе пĕлмен канонада каçа хирĕç [illegible]ланса пырать. Ыран çак вăхăтра...

— Ăçта пулатпăр ыран çак вăхăтра, Степан? — ыйтрăм эпĕ пĕр кĕтмен çĕртен. Степан вăраннă пек пулчĕ.

— Инçетре пулатпăр, — хĕвеланăç еннелле пуçне ухрĕ вăл.

Мĕн чухлĕ халăх Степан пек таса ĕмĕтпе пурăнать! Акă политрук Фоменко, сержант Немов, клуб начальникĕ Иванина — вĕсем пурте пĕлĕшсем тăрăх кăна тĕрлĕ хыпар илтнĕ пек туяççĕ хăйсене. Е пĕр сăмах та илтмен. Ăçта вĕсен тăванĕсем, юратнă мăшăрĕсем, çывăх ачи-пăчи, тăван ашшĕ-амăшĕсем? Тамăкри пек нушасене епле чăтса ирттереç-ши мĕскĕнсем? Хăвăртрах, хăвăртрахчĕ! Пире тăван Украина кĕтет. Ытарма çук ылттăн çĕршывăмăр кăкăрĕ çинче хура юнлă çăхансемпе вăрă-хурахсем! Пирĕн вăй-хăватлă шеренгăсем кăвак сутă çитессине кĕтсе тăраççĕ. Вĕçĕхсе çитнĕ хаяр çилĕ вĕри юн тапнинчен те хастарлăрах, тĕнче пек аслă, тÿпе пек виçесĕр çÿлте тăрать. Çавăн пек ĕнтĕ пирĕн тулса çитнĕ çилĕ.

Сĕм-тĕттĕм пĕлĕте самантран-саманта симĕс те кăвак ракетăсем ярăнса ялтăртăр çутатаççĕ те таçта инçете ÿксе тĕпренеççĕ. Хăшпĕр ракетăсем сехет хушши çÿлте тытăнса тăраççĕ. Вĕсене оборонăра пытанса выртакан нимĕçсем ĕнтĕ пĕчĕккĕ парашютсемпе антараççĕ.

Хамăр командăй пунктра çитнĕ вăхăтра пасăр кайнă разведчиксенчен связной килсе кĕчĕ.

— Хушнă ĕçе турăмăр. Ял таврашĕнчи сăртра фашистсен виçĕ дзотран кая мар,—тет вăл пирĕн чаçăн командирне. — Хуралра пĕр фашист кăна тăрать. Пирĕннисене улталас шухăшпа малтан вăл автоматпа çÿлелле перкелесе илет, унтан вара урăх çĕрте тăракан миномет патне пырать те тĕллемесĕр-тумасăр ик-виç мина кăларса ярать. Е тата вăлах акă çак вар хутламĕнче (вăл карттă çине кăтартать) пытанса пĕр ик черет пулеметпа перет. Вара ракетăпа çутатса хăйне пĕр сехетлĕхе канăç тупать.

— Питĕ лайăх, — тет командир.

Унăн пуçне çĕнĕ шухăшсем пырса кĕреççĕ. Сăрт тавра кăна мар, вăрман хĕррипе те автоматсемпе разведчиксен ушкăнне ярасчĕ. Нимĕçсем чее, вĕсене улталама тата чеерех пулни кирлĕ.

Землянкăра [illegible].

— Кобяков [illegible] эсир? 82-[illegible]рать командир.

Кобяков [illegible] политрук, хамăр енчи çын, Улатăр вырăсĕ.

— Лайăх илтетĕп.

— Халех кунта килнĕ пулăр. Пĕччен мар, çирĕмĕн. Çур сехетрен. Землянкăра пăчă. Телеграф метр хыççăн метр лентине кăларса тăрать. Çурта çатăртатса çунать.

— Командир юлташ, çĕнĕ хыпар — пирĕнтен сулахай енче гвардеецсем пулаççĕ.

— Тĕлĕнтертĕр!.. Ун çинчен паçăрах пĕлетĕп эпĕ, — тарланă çамкине тутăрпа шăлса илет командир телеграфистсем çине пăхса.

Пирус туртма тухрăмăр. Пирĕн командăй пункт пĕр çыран хĕррийчи блиндажра вырнаçнă. Хĕлле кунта нимĕçсем пурăннă. Вĕсене çуркунне хăваласа кăларнă, халĕ акă вĕсене тата хĕвеланăç еннеллерех хăваламалла.

Хамăр çумранах нимĕçсен мини шăхăрса иртрĕ. Иртрĕ те, тепĕр енчи лапама ÿксе çурăлчĕ. Мина ванчăкĕсем тĕрлĕ еннелле сапаланчĕç.

Эпир шикленместпĕр. Паян вĕсем пурпĕрех урăх кунта темеççĕ. Ку мина ăнсăртран килсе ÿкнĕскер çеç. Каларĕç вĕт-ха пирĕн разведчиксем паçăр? Çавă вăл.

Политрук Кобяков пĕр ушкăн разведчиксемпе килсе çитрĕ. Пĕрне-пĕри çывăх лăх çунтăмăр та каллех командăй пункта кĕтĕмĕр.

— Сире итлетĕп эпĕ, командир юлташ! — сунаслă баритонпа янратать Кобяков.

— Халех Кульеваха ялĕ хĕррипе иртекен вăрман тавраш çирĕм тăватă сехетлĕхе разведкăна каймалла пулать. Виçĕ сехетре тухса каятăр. Маршрут... Сире çакăн пек задани пулать: сылтăм флангран мĕнле вăй-хăватпа пеме ĕмĕтленет противник, унта мĕн-мĕн пур унăн? Çавăн çинчен кашни çур километр иртмессерен пире пĕлтерсе тăмалла пулать. Сире улăштаракан Зильберман лейтенантăн ушкăнĕ пулать. Пароль... Пирвайхи ответлă задачăна ăнăçлăн татса парассине ĕмĕтленетĕп.

Командир мĕнле меслетпе тăшман патне çывхарса, ăна мĕнле майпа тĕрĕслемелли çинчен лайăх ăнлантарса пачĕ. Ăçта хамăр постсене тĕл пулма пултарассине пĕлтерчĕ. Вара разведчиксене тăван алшĕ пек ăшшăн ăсатрĕ.

Икĕ сехет. Эпир хамăр вырăна кайрăмăр. Ыйăх вĕçрĕ. Часах çĕршер батарейăсем хĕвеланăç еннелле пеме тытăнчĕç. Кĕрлесе тăнă сасă, ялтăртатса вут çутатни — темĕнле тĕнче кисреннĕ чухнехи пек пулчĕ. Нимĕçсем ответ памаççĕ-ха.

Ялта кашни çурт хушшинче, пахчара, хăшпĕр çĕрте урамра темĕн чухлĕ танксем пуçтарăннă. Пур чаçсенче те митингсем пуçланнă ĕнтĕ. Кăвак çутă çывхарчĕ.

Эпир малти рубеж патне çитсе чарăнтăмăр.

Акă ĕнтĕ вут-хĕм линийĕ. Автоматсен черетлĕ хаяр сассисем çиллеслĕн çатăртатса илеççĕ те, сывлăшĕсене вăхăтра çавăрма ĕлкĕреймен пек пулса, каллех пĕр ăстрăма чарăнаççĕ.

Хăçан çитĕ-ши çичĕ сехет? Вăхăт час иртмест.

— Лейтенант юлташ, кăштах малалла кайса килмен-ха—тесе ыйтать красноармеец Иван Шанин.

— Кайса килĕр! — тет ăна лейтенант, — асăрханарах тыткала кăвна, унсăр...

«Пĕлместĕп пулать ĕнтĕ» — кÿреннĕ пек пулчĕ Шанин хăй ăшĕнче. Васкамасăр кăна хырăмпа шуса снарядсем чавнă шăтăксем тăрăх вăл малалла шурĕ.

Пăшалпа тата пулеметпа перкелени ытларах илтĕне пуçларĕ...

Пĕр çур сехетрен хайхи Шанин таврăнчĕ те:

— Куртăр-и? — тесе ыйтрĕ вăл пирĕнтен.

— Мĕскер?

— Виçĕ фрица леш тĕнчене пехиллесех ăсатрăм.

Ĕненмесĕр пăхкаласа илтĕмĕр эпир ун çине.

— Лейтенант юлташ, наблюдательсем пĕлтерчĕç. Сăрт хыçĕнче тĕмескере выртакан фашистсен виçĕ снайперне халĕ çеç персе вĕлерчĕç, — терĕç телефонистсем.

— Ну, маттур та Шанин, ку сана килĕшекен ĕç, — терĕмĕр эпир унăн аллине чăмăртаса.

— Ман алă çăмăл пулакан-чĕ-ха! — каллех çав сăрт еннелле пăхкаласа илчĕ Шанин.

Командирсем çитрĕç. Пурне те малашнехи задачăна каласа ăнлантарчĕç. Халĕ кам ăçталла каясси пурне те паллă ĕнтĕ.

— Хатĕрленĕр! — илтĕнчĕ командир сасси. Пурте пăшалĕсене тĕплĕн авăрласа, пилĕкĕсене çăмăлтарах çыхрĕç. Каскисене пусарах лартрĕç.

Политрук патĕнчен сулахай флангăла иртекен комиссар наступлени пуçланасси çинчен виçĕ сăмах каларĕ. Вара пистолетне кăларчĕ те:

— Тăван Украинăшăн, Сталиншăн! Малалла! Хĕвеланăç еннелле! — тесе хыттăн кăшкăрчĕ те пурте окопсенчен сиксе тухса малалла васкавлăн утма пуçларĕç. Флангсенчи пулеметсем вăйлăн персе тăраççĕ. Таçта малта пирĕн артиллеристсем ăсатнă снарядсем çурăлаççĕ.

Наступлени пуçланчĕ.

Старши политрук Н. ИЛЬБЕКОВ.
ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 174

Гор. Чебоксары, типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 319. Ф. 6. 58 64